## Çилхи витĕр çил вĕрет…

Çеçен хирĕн вĕçсĕр ирĕк уççинче
Утлă çарăн эскадронĕ ыткăнать.
Хĕрӳ пурнăç пирĕн — çивĕч ут çинче,
Чĕлпĕрне эс çирĕпреххĕн тыт кăна.

Урхамахăм, урхамахăм — çилçунат,
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет.

Хĕççине хăйрать тăшман, пире юнать,
Тупписем тăсасшăн вутлă чĕлхине;
Юхтарасшăн-мĕн вĕсем пирĕн юна,
Тавăрасшăн каялла ĕлĕкхине.

Кам пулсан та, шикленесси — пире ют!
Тыт-ха, тусăм, çирĕпреххĕн чĕлпĕре.
Урхамахăм, урахамахăм — çивĕч ут,
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет.

Эй, кашлать, кашлать хирте колхоз тырри,
Колхоз халăхĕ ĕçлет-çке савăнса!
Тăшман юнлă аллине çех тăстăр-и —
Вилĕм тупĕ ăçтан килнĕ çавăнтах!

Хĕçсем çивĕч, çирĕп тытнă пăшала,
Тус — винтовка пирĕн, тĕрĕс тĕл перет.
Ыткăн, ыткăн, урхамахăм, малалла!
Çилхӳ витĕр, çилху витĕр çил вĕрет.

Çĕршыв çийĕн çут хĕвел çиçсе çунать,
Саламлать-çке ирсерен хĕвел пире.
Урхамахăм, урхамахăм, — çилçунат,
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет.

Эпир хатĕр, Тăван çĕршыв чĕнтĕр çеç,
Патăр çеç команда çивĕч командир, —
Шĕл кăвар пек утсене кĕçентерсе
Ăмăрт кайăксем пек вĕçĕпĕр эпир!

Тăшман умĕнче чакасси — пире ют.
Малалла, ачсем! Тыт çирĕп чĕлпĕре!
Урхамахăм, урхамахăм — çивĕч ут,
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет...

1936

*Уйăп, М. Çилхи витĕр çил вĕрет... : сăвă // Уйăп, М. Илĕртӳллĕ инçет : суйласа илнĕ сăвăсемпе поэма / М. Уйăп. – Шупашкар, 1972. – С. 63-64*